# СĂВАПЛĂ ИУДА АПОСТОЛ МĔН ПУР ĔНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

## 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Иисус Христос чуринчен, Иаковпа пĕртăван Иудăран – Атте
Турă сăвапласа тасатнипе, Иисус Христос упранипе пурăнакан
чĕнсе илнисене. 2 Сире нумай-нумай ырăлăх, канăçлăх, юратулăх
сунатăп.

*Суя вĕрентӳçĕсене айăплав пуласси*

3 Савнă тăванăмсем! Сирĕн патăра пурте çăлăнасси çинчен ма-
нăн питĕ çырассăм килетчĕ. Анчах та эпĕ сирĕн патăра Турă
Хăйĕн халăхне пĕрре тата яланлăха панă ĕненӳшĕн кĕрешме
ӳкĕтлесе çырас терĕм. 4 Мĕншĕн çырас терĕм-ха? Мĕншĕн тесен
хăшĕ-пĕрисем сирĕн хушшăра вăрттăн шăвăнса кĕчĕç. Унашкал-
лисене айăплав пуласси çинчен Çырнинче тахçанах каланă. Тур-
ра хисеплемен çав çынсем Турă панă ырăлăха пула тем тума та
юрать теççĕ. Хăйсем вара пĕртен-пĕр Патша Турра, Иисус Хрис-
тос Хуçамăра йышăнмаççĕ.
5 Çакна эсир пĕлетĕр пулин те, татах асилтерес тетĕп: Хуçа
Турă Хăйĕн халăхне Египет çĕрĕнчен илсе тухса çăлса хăварнă,
анчах та ĕненес теменнисене кайран пĕтернĕ. 6 Тата хăйсен ти-
вĕçлĕхне упраса хăварайман, хăйсен вырăнĕнчен пăрахса кайнă
ангелсем çинчен асилтерес тетĕп. Турă вĕсене аслă суд кунĕ валли
ĕмĕрлĕх сăнчăрта, сĕм-тĕттĕмре усрать. 7 Тата эпĕ сире Содомпа

Гоморра хулисем ҫинчен, ҫак хуласем пекех ҫут ҫанталӑка хи-
рӗҫлесе асса пурӑнакан таврари ытти хуласем ҫинчен асилтерес
тетӗп. Вӗсенчен тӗслӗх илекен ан пултӑр тесе Турӑ вӗсем ҫине
ҫӳнми вут асапне янӑ. 8 Ӳт-пӗве ирсӗрлентерекен, ҫӳлти пуҫлӑх-
сене йышӑнман, ҫӳлти вӑйсене хурлакан ҫав суя вӗрентӳҫӗсемпе
те ҫаплах пулӗ. 9 Моисей вилсессӗн унӑн ӳчӗ пирки шуйттанпа
тавлашнӑ чухне Михаил Архангел шуйттана айӑплама хӑяйман:
«Хуҫа Турӑ чартӑрах сана», – тенӗ ҫеҫ. 10 Ку ҫынсем вара хӑйсем
пач пӗлменнине хурлаҫҫӗ. Вӗсем, ӑссӑр выльӑхла, ӳт-пӳ хистени-
не кӑна пӗлеҫҫӗ, ҫавӑ вӗсене тӗп тӑвать те. 11 Хуйхӑ пулӗ вӗсене!
Вӗсем Каин ҫулӗпех пыраҫҫӗ, мула хапсӑнса Валаам пек улта-
ланаҫҫӗ, Корей пек кутӑнлашсах пӗтеҫҫӗ. 12 Сирӗн юратулӑх сӑйӗ
вӑхӑтӗнче вӗсем ыттисене ҫылӑха кӗртеҫҫӗ. Вӗсем сирӗнпе пӗрле
чухнех намӑс-симӗсе пӗлмесӗр хӑйсен хырӑмӗшӗн кӑна тӑрӑшаҫ-
ҫӗ. Вӗсем – ҫил хӑвалакан пуш пӗлӗтсем пек. Вӗсем – ҫимӗҫ
кӳмен, кӑкланнӑ кӗрхи йывӑҫсем пек, ҫав йывӑҫсене икӗ хут
хӑрнӑ теме пулать. 13 Вӗсем – хӑйсен намӑссӑрлӑхӗпе кӑпӑклана-
кан тискер тинӗс хумӗсем. Вӗсем – сӗм тӗттӗмлӗхре яланлӑха
ҫӗтсе кайнӑ ҫӑлтӑрсем.

14 Адамран ҫиччӗмӗш сыпӑкри Енох унашкаллисем ҫинчен
пророкла ҫапла каланӑ: «Акӑ, Хуҫамӑр Хӑйӗн святой пин-пин
ангелӗпе килет. 15 Вӑл пурне те суд тума, Турра юрӑхсӑр мӗн пур
ӗҫӗсемшӗн тата Турра хирӗҫ каланӑ мӗн пур хаяр сӑмахӗсемшӗн
Хӑйне хисеплемен ҫылӑхлӑ ҫынсене айӑплама килет». 16 Вӗсем
яланах ӳпкелешеҫҫӗ, нӑйкӑшаҫҫӗ, Турра хисеплемесӗр тата Турӑ
йӗркине пӑсса ӳт-пӳ хистени хыҫҫӑн каяҫҫӗ, мӑнкӑмӑллӑн кала-
ҫаҫҫӗ, хӑйсене усӑллӑ чухне йӑпӑлтатма та именмеҫҫӗ.

*Асӑрхаттарни тата чӗнсе калани*

17 Эсир вара, савнӑ тӑванӑмсем, Иисус Христос Хуҫамӑрӑн апос-
толӗсем малтанах каласа хунӑ сӑмахӗсене асра тытӑр. 18 «Юлаш-
ки вӑхӑтсенче, – тенӗ апостолсем, – хӑйсен ҫылӑхлӑ кӑмӑлӗсе-
не тултаракан хурлавҫӑсем тупӑнӗҫ». 19 Ҫав ҫынсем пӗрлӗхлӗ
ӗненӳрен уйӑрӑлаҫҫӗ. Вӗсен чун-чӗмӗ ҫук, ӳт-пӳ хистени кӑна
пур. 20 Эсир вара, савнӑ тӑванӑмсем, сӑваплӑ ӗненӳре хӑвӑра
ҫирӗплетӗр, Святой Сывлӑшпа килӗшӳллӗн кӗлтӑвӑр. 21 Хӑвӑ-
ра Турӑ юратнине астуса пурӑнӑр, ырӑлӑхлӑ Иисус Христос Ху-
ҫамӑр ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ парасса кӗтӗр. 22 Пӗрисене, ӗненӳ пирки

иккĕленекенсене, хĕрхенсе ӳкĕтлĕр. 23 Теприсене, ĕмĕрлĕх вутпа
хăратса, вутран туртса кăларăр, çăлса хăварăр. Виççĕмĕшсене ва-
ра асăрханса питлемелли кăна юлать. Вĕсен çылăхлă ӳт-пĕвĕпе
вараланнă тумтирĕнчен те йĕрĕнĕр.

### *Пиллени*

24 Сире ӳкесрен упраса хăварма, çитменлĕхсĕр те савăклăскер-
сене Хăйĕн мухтавĕ умне тăратма пултаракан, 25 Иисус Христос
Хуçамăр урлă хамăра Çăлакан, Пĕртен-пĕр Ăсларан та Ăслă Турă
ĕмĕрсемччен те, халĕ те, ĕмĕр-ĕмĕрех мухтавлă, аслă, хăватлă,
вăйлă пултăр. Аминь.